**Урокра**

Шăнкăрас сас пачĕ
урока чĕнсе.
Пĕтĕм класс шăпланчĕ
парта хушшинче.

Ак кĕрет учитель
савăк сăнпалан,
кăмăллă вăл питĕ
пирĕнпе ялан.

Калаçать вăраххăн
ăс куллен парать.
Ун кашни сăмахĕ
шухăша ярать.

Вулама пĕлетпĕр,
шутлама, çырма.
Тăрăшатпăр эпĕр,
вăхăт çук ырма.

Урокра туптатпă
хамăр ăс-тăна,
Вĕренсе пыратпăр
«пиллĕкпе» кăна.

*Вирьял,Ю. Урокра : [сăвă] / Ю. Вирьял // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 275.*